# Ёмӗт

## *Н. Илпек*

Илемлӗҫке кӗсле сасси,
Йанраҭҫке уҫӑ саслӑ йурӑ.
Ен те кӗслеҫӗ пуласси
Инҫех йулмарӗ, акӑ курӑр.

Каҫпа, хӗвел анас чухне,
Сат хӗрринче ларап та епӗ,
Пусап кӗсленӗн хӗлӗхне—
Йанравлӑ сассине илтетӗп.

Кӗсле сасси инҫе-инҫе
Кайаҭ тӗтрелӗ сывлӑш витӗр,
Ҫав сасӑри хумсем ҫинче
Илтсеттӗм ҫамрӑклӑх кӗвви те:

... «Сума-сӑвап сана, йӗкӗт,
Сума-сӑвап сана, ҫӗршывӑм;
Кӑмӑл тули вӑйхал, ёмӗт...
Сирте вӗт, хӗрипраҫ йе ывӑл.

Сирте—хаваслӑх, ҫамрӑксем,
Сирте—кунҫул, сирте—малаллӑх»...
Ҫапла йантраҫҫӗ хӗлӗхсем,
Ҫаплах кӗслеҫӗмӗн хавалӗ.

Ун уҫӑ сассине илтсен,
Лӑпкӑ тапма пӗлмест чӗреҫӗм;
Ёмӗт пӗрре: пӗлӳ ҫитсен,
Пулатӑпах чӑн-чӑн кӗслеҫӗ.